26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ЯНВАРЬ
22
ШАМАТКУН
16(6511) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ленинпа Сталин ялавĕпе совет халăхĕ çĕнтерӳ патне пырать

В. И. Ленин вилни 20 çул тултарнă ятпа 1944 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче пухăннă траурлă чаплă ларура А. С. ЩЕРБАКОВ юлташ тунă доклад

ЛЕНИН ÇУЛĔПЕ

Юлташсем! Совет Союзĕнчи халăхсем çирĕм çул ĕнтĕ Ленинсăр пурăнса, унăн нихăçан тĕксĕмленми идейисемпе хавасланса ĕçлеççĕ, кĕрешеççĕ. Пирĕн партипе Совет государствине тăваканăн идейисем тĕрĕссине тата вĕсен пурнăçри хăватне этир пурăнса иртгернĕ кашни çултанăк çĕнĕрен те çĕнĕрен кăтартса пычĕ.

Ленин вилни çирĕм çул тултарнă куна пирĕн çĕршыв Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла çарĕсене хирĕç наступлени туса пынă вăхăтра асăнса ирттерет. Çак чаплă çапăçусенче пирĕн халăх, пирĕн çар Ленинпа Сталин ялавĕ айĕнче кĕрешсе çĕнтерӳсем туса пыраççĕ.

Халĕ, фашистла государствăсен пĕрлешнĕ хĕçпăшаллă вăйĕсене хирĕç пыракан вăрçăра пирĕн государство йывăр тĕрĕслеве тӳссе иртгернĕ хыççăн, — аслă Ленинăн сăнĕ пирĕн умма татах та яр-уççăн тухса тăрать.

Кивĕ Российăн историйĕ çапла пулнă: ăна çар тĕлĕшпе кая юлнăшăн, хуçалăх тĕлĕшпе кая юлнăшăн, культура тĕлĕшпе кая юлнăшăн, государство тĕлĕшпе кая юлнăшăн пыра-пыра çапнă.

Ленинпа Сталин пирĕн çĕршывăн ĕмĕртен кая юлса пынине пĕтерсе лартмалли тата пирĕн государствăн никама пăхăнманлăхне çирĕплетмелли çулсемпе майсене кăтартса пачĕç. Çакă пална: патша Российи хăйĕн аталанăвĕнче экономика енчен тĕнчери малта пыракан государствăсенчен юлнăçемĕн юлса пынă, çавăн пирки вăра вăл ытти государствăсен чуралăхне ытларах та ытларах кĕрсе пынă. Пирĕн çĕршыв çав çулпа кайнă пулсан, çав çул ăна хăй тĕллĕн уйрăм государство пулса тăрассине çухатасси патне илсе пынă пулĕччĕ. Пирĕн çĕршыва çавăн пек инкĕсран большевиксен партийĕ çăлса хăварчĕ. Пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçăн опытне шута илсе (кая юлнă патша Российĕ çав вăхăтра пĕтес патнех çитнĕччĕ) Ленин Октябрьти революци пулас умĕн çапла каланă: «Вăрçă вăл нееллесе тăмасть, вăл ыйтăва калама çук çивĕч лартать: е вилмелле, е малта тăракан çĕршывсене хуса çитсе экономика тĕлĕшпе те вĕсенчен иртсе каймалла... Вилмелле е пĕтĕм вăйпа малалла каймалла» (Ленин, т. XXI, стр. 191).

Октябрьти Социализмлă Аслă революцие пула тата Ленинпа Сталин политикине пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пынине пула, Совет çĕршывĕ хăватлă индустрийлĕ тата колхозлă держава пулса тăчĕ. Совет влаçĕ çулĕсенче пирĕн çĕршыв экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен çакăн пек хăвăрт аталанса пынипе тĕнчене кăтартнă тĕслĕхсене халиччен истори курман.

Совет халăхĕн мĕнпур вăйне кучухнехи хăватлă промышленноçа тунă çĕре хунă. Çак ĕçре майĕпен пыма юраман. Балтика тинĕсĕнчен пуçласа Лăпкă Океана çитиччен, Пăрлă Океанран пуçласа Хура тинĕсе çитиччен — çак анлă çĕр çинче предприятисем тăвас ĕç калама çук вăйлăн саралса кайрĕ, çĕнĕ хуласем, çĕнĕ промышленность центрĕсем ӳсе-ӳсе ларчĕç.

Пирĕн çĕршывра промышленноçăн сборонăшăн питĕ кирлĕ отраслисем — станоксем, самолетсем, автомобильсем, тракторсем тăвакан промышленноçсем, хими промышленноçĕ ӳсе çитĕнчĕç. Электричество энергийĕ, нефть продукчĕсем тăвасси тата çĕркăмрăк кăларасси темиçе хут ӳсрĕ. Хура металлурги çав тери вăйлăн ӳссе кайрĕ. Хĕвелтухăçĕнче çĕр кăмракĕпе металлургин питĕ хăватлă çĕнĕ базине туса хунă.

Çакă палла: пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçăра патша Российи, экономика тĕлĕшĕнчен кая юлнă пирки, аркатса тăкас хăрушлăх умне пырса тăначчĕ. Промышленность ун чухне самолетсемпе танксем çеç мар, çав вăхăтри вăрçă хатĕрĕсене те парса тăма пултарайман. Вырăс çарĕнче йывăр артиллери пулманпа пĕрех, çăмăл артиллери, пулеметсем тата винтовкăсем те пулин çитмен. Хĕрӳллĕ çапăçусем пынă вăхăтсенче çар снарядсемпе патронсемсĕр тăра-тăра юлнă.

Хальхи вăрçăра пирĕн çар хĕçпăшалпа боеприпассем çитменнине туймасть, Хĕрлĕ Çарăн çапăçмалли техники лайăхланнăçемĕн лайăхланса пырать. Çакă вăл Ленинпа Сталин Россия техника тĕлĕшпе ĕмĕр кая юлса пынине пĕтерме кăтартса панисене пурнăçа кĕртнин результачĕ пулса тăрать.

Тата çакна та манма юрамасть: 1914—1917-мĕш çулсенчи вăрçăра Российăпа Германи фронтĕнче нимĕçсемпе вĕсен союзникĕсен 127 дивизийĕнчен ытла тăман. Халĕ, пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш вăрçăра, Германипе унăн вассалĕсем Совет Союзне хирĕç 260 дивизирен кая мар кăларса тăратрĕç. Çапла ĕнтĕ, Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче халь нимĕçсемпе вĕсен вассалĕсен пĕтĕм тĕнчери пĕррремĕш вăрçăра пулнинчен икĕ хут пысăкрах çарĕ тăрать.

Сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче тунă хăватлă индустрисĕр çакăн пек вăрçа туса пыма май пулман пулĕччĕ, çак вăрçăри пек çапăçусен анлăшне, тăшманăн çарĕсен характерне, чи çĕнĕ техникăн хисепне тĕнче халиччен нихăçан та курман. Çакăн пек вăрçăра пушшех те çĕнтерме май пулман пулĕччĕ.

Совет Союзĕн хăватлă промышленноçĕ Хĕрлĕ Çар тăвакан ăнăçусен материалпа техника никĕсĕ пулса тăрать.

Халăхăн пĕтĕм вăйне кучухнехи промышленноçа тума мобилизацилесснĕ хыççăн, партти çакăнпа пĕрлех, меллĕ условисем пулса çитсен, ялхуçалăхне тĕпренех çĕнетме тытăнчĕ. Коллективизаци политикине пурнăçа кĕртнине пула, социализмлă обществуо тумалли çĕнĕ те кирлĕ условисем туса хутăмăр. Халăх хуçалăхĕн чи кая юлнă пайне урăхлатса çĕнетрĕмĕр. Пирĕн çĕршывра сапаланса выртакан хресчен хуçалăхĕсем вырăнне, тахçанхи техникăпа усă курса тата улшăнман кивĕ йăласемпе пурăннă хресчен хуçалăхĕсем вырăнне пирĕн çĕршывра чи малта тăракан техникăпа хĕçпăшалланнă социализмлă шултăра ялхуçалăхĕ пулса тăчĕ. Çапла вара, социализм ялта та çĕнтерчĕ.

Ялхуçалăхне социализмла улăштарса çĕнетес пирки Ленинпа Сталинăн аслă кăтартăвĕсем пурнăçа кĕчĕç. Пуриншĕн те паллă, тылра кая юлнă, вакланса пĕтнĕ, пĕчченхуçалăхсем пур чухне хальхи пек вăрçа туса пыма май та пулман пулĕччĕ.

Вăрçăн йывăр условийĕсенче çарпа çĕршыва апат-çимĕç, промышленноçа чĕртавар парса тăракан колхозсем фронтăн тата Хĕрлĕ Çарăн çитĕкĕвĕсен çирĕп никĕсĕ пулса тăраççĕ. Большевиксен партийĕ ертсе пынипе пирĕн çĕршывра социализмлă çĕнĕ экономика тунă çеç мар, пирĕн çĕршыва тата техникăна малалла аталантарма тата ăна ĕçе яма пултаракан кадрсем те вĕрентсе хатĕрленĕ.

Кадрсем хатĕрлесси хуçалăх строительстви аталаннă хăвăртлăхсемпех пулса пычĕ. Темиçе çул çеç иртрĕ, пирĕн çĕршывра ĕнтĕ промышленноçпа транспортра инженерсен, техниксен, квалификациллĕ рабочисен, ялхуçалăхĕнче—трактористсен, комбайнерсен, агрономсен нумай йышлă кадрĕсем ӳссе çитĕнчĕç. Техникăна пĕлекен çак кадрсем пурри çар кадрĕсене те—артиллеристсене, танкистсене, летчиксене, связистсене, саперсене нумай хатĕрлеме май пачĕ. Техникăпа экономика енчен малта тăракан çĕршывра кăна çавăн пек кадрсем йышлăн ӳссе çитĕнме пултараççĕ.

Çапла ĕнтĕ, рабочисемпе хресченсенчен хамăр Тăван çĕршыва чунтан парăнса ĕçлекен интеллигенци хатĕрлеме Ленинпа Сталин кăтартса панисем пурнăçа кĕчĕç. Интеллигенцисĕр, техникăна пĕлекен кадрсемсĕр кучухнехи вăрçа туса пыма май пулман пулĕччĕ. Çавăн пек кадрсем пурри пирĕн партие вăрçă вăхăтĕнче чи йывăр задачăна — промышленноçа хĕçпăшалсем тума часрах куçарас задачăна, кĕске вăхăтрах темиçе миллионлă çар пухса çитерес задачăна татса пама май пачĕ.

Совет Союзне хирĕç усĕр вăрçă пуçласа ярса, гитлеровецсем совет обществинчи шăтăк-çурăксем тупма, унăн пĕрлĕхне пăсма ĕмĕтленнĕ. Вĕсем рабочисемпе колхозниксене пĕр-пĕрине хирĕçтерсе яма ĕмĕтленнĕ. Анчах та гитлеровецсем çапла шутланине аркатса тăкни халь ĕнтĕ пуриншĕн те паллă. Рабочисемпе хресченсен союзĕ çапăçусен хирĕсенче пиçĕхрĕ, тылра пурнăçа шеллемесĕр ĕçленинче çирĕпленчĕ, халĕ ĕнтĕ вăл нихçанхинчен те ытларах тĕреклĕ.

Партин ленинла-сталинла политики мĕнпур ĕççыннисене пĕтĕçтерчĕ, рабочи класпа хресченсен тата интеллигенцин союзне туса çирĕплетрĕ, халăхсем хушшинче ĕлĕк пулнă хирĕçӳсене пĕтерсе лартрĕ. Пирĕн ирĕклĕ отечествăри халăхсен туслăхĕн шанчăклă тĕрекĕ пулса тăчĕ. Халĕ ĕнтĕ аслă вырăс халăхĕ ертсе пынипе пирĕн çĕршыври мĕнпур халăхсем хамăр çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан вăрçăра, алла хĕçпăшал тытса, хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçаççĕ. Çакăнта ленинла-сталинла наци политикин вăйĕ тата пурнăçри хăвачĕ палăрчĕ, çав политика Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсене пĕр-пĕринпе тăванла килĕштерсе ĕçлеме май пачĕ.

Çапла ĕнтĕ, Ленинпа Сталин Совет государствинчи халăхсен туслăхне çирĕплетме, рабочисемпе хресченсен тата интеллигенцин союзне тĕреклетме анлăн кăтартса панисем пурнăçа кĕчĕç.

Фашистла йыткĕтĕвĕсем пирĕн çĕршыва вăрă-хурахла тапăннăранпа икĕ çул çурă ытла иртрĕ ĕнтĕ. Ленин туса хунă Совет государстви, Сталин юлташ ертсе пынипе никам çĕмĕреймин крепость пулса тăнăскер, фашистла йыткĕтĕвĕсем хаярран хĕснине чăтса тăчĕ çеç мар, вăл ăна çав тери вăйлăн пырса çапса, сирсе ячĕ, çавна тӳсейменнипе халь гитлерла коалици ишĕлет, фашистсен «Европăри çĕнĕ йĕрки» кисренет. Пулас ăрусен кун-çулне татса паракан хальхи вăрçăра совет халăхĕ чаплă çĕнтерсе пырать пулсан, эпир уншăн Сталин юлташа тав тума тивĕçлĕ, Сталин ертсе пынипе пирĕн парти Ленин çулĕпе пычĕ тата Ленин хушса хăварнисене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пычĕ. (Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ).

ХĔРЛĔ ÇАРĂН АСЛĂ ÇĔНТЕРĔВĔСЕМ

Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 19 çул тултарнă хыççăнхи çулталăк Отечественнăй вăрçă ĕçĕсенче татăклă улшăну çулталăкĕ пулса тăчĕ. Çак çулталăк Хĕрлĕ Çар вăрçăра ăнăçусем тунипе, нимĕç захватчикĕсен çарĕ пысăк поражениссм тӳснипе иртрĕ. Иртнĕ çулталăк Ленинăн çак сăмахĕсенчи аслă чăнлăха тепĕр хут кăтартса пачĕ: «Рабочисемпе хресченсен ытларахăшĕ хăй совет влаçĕшĕн—ĕççыннисен влаçĕшĕн, хăйне тата хăйĕн ачисене культурăн пĕтĕм ырлăхĕсемпе, этем ĕçĕпе тунă пĕтĕм пуян пурлăхпа усă курма май паракан ĕçшĕн кĕрешнине пĕлсе, туйса тата курса тăрать пулсан, çавăн пек халăха нихăçан та çĕнтерме çук». (Ленин, соч. т. XXIV стр. 258—259).

Нимĕçсем—фашистла захватчиксем, Хĕрлĕ Çара çĕмĕрсе тăкас тата пирĕн Тăван çĕршыва чуралантарас тесе, çак вăрçă тăршшĕпех çав тери хаяррăн тапаçланчĕç, çапăçăва хăйсен мĕнпур вăйĕсене кĕрпе-кĕрпе ячĕç. Анчах Совет Союзне çĕнсе илме ĕмĕтленсе тунă гитлеровецсен авантюристла планĕсем пĕрин хыççăн тепри путлакса пычĕç.

Вăрçăн малтанхи уйăхĕсенче гитлеровецсем кăна мар, союзлă çĕршывсенчи политикăпа государство деятелĕсенчен нумайăшĕ тесен те ытлашши пулмĕ, Хĕрлĕ Çарăн ĕçĕсем вăхăтлăха ăнманнине Совет государстви çарпа экономика тĕлĕшĕнчен вăйсăр пулнине кăтартса тăрать, тесе хакланă. Вĕсем çапла шутланă: Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче гитлерла йыткĕтĕвĕсем, хĕвеланăçĕнчи пекех—Польшăри, Бельгири, Францири тата ытти çĕршывсенчи пекех, çăмăллăн та хăвăрт çĕнтерӳ тăвĕç тенĕ.

Хамăн сăмахсене çирĕплетсе пама эпĕ икĕ çын каланине кăтартса парăп, тĕрĕссипе çавăн пек каланисене темĕн чухлĕ те илсе кăтартма пулать.

Америка журналисчĕ Кэссиди хăйĕн «Мускавра çырнисем» ятлă кĕнекинче çапла пĕлтерет: вăрçă пуçламĕшĕнче союзниксен лагерĕнчи экспертсем (вырăссен ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен экспертсем) Совет Союзĕ часах пĕтсе ларĕ, тесе каланă. «Пур экспертсем те, — тесе çырать Кэссиди, — Российăра вăрçă виçĕ эрнерен пуçласа виçĕ уйăхчен çеç пырĕ тесе шухăшланă. Вĕсене ун чухне вăрçăн виççĕмĕш çулталăкĕ çитĕ те Хĕрлĕ Çар Германин хĕçпăшаллă вăйĕсене вăйлăн пыра-пыра çапĕ тесе каланă пулсан питех те тĕлĕнсе кайнă пулĕччĕç».

Америкăри паллă государство деятелĕн Стеттиниусăн кĕнекинче те çавăн пек калани пур: «Российăри вăрçă августăн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕ тесе каланă нумай тавлашусене аса илетĕп эпĕ,—тесе çырать вăл (сăмах кунта, паллах 1941 çулхи августăн 1-мĕшĕ çинчен пырать. — А. Щ). —Çавăн пек шухăшлакансем: эпир Российăна яракан мĕнпур хĕçпăшал Гитлер аллине лекĕ, тенĕ. Совет халăхĕн пĕрлĕхĕпе Хĕрлĕ Çарăн вăйне çав кунсенче Берлинра çеç мар, Вашингтонра Лондонра та тивĕçлипе хакламан».

Совет халăхĕ çинчен калас пулсан, вăл кĕрешĕвĕн чи йывăр кунĕсенче те хăй çĕнтерес шанчăка пĕр минутлăха та çухатман, мĕншĕн тесен вăл Ленинпа Сталин ертсе пынипе урăхлатса çĕнетнĕ социализмла çĕршыв хăватлине, нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тата вĕсен союзникĕсем Совет государствин тĕреклĕхне хавшатма пултарас çуккине пĕлсе тăнă.

Халăха кирек хăçан та тĕрĕс калама хушакан çирĕп правилăна —

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ГОВОРОВА

Арми генералне МЕРЕЦКОВА

ЛЕНИНГАРД фронтĕнчи çарсем, ВОЛХОВ фронтĕнчи çарсем тӳррĕмĕнех пулăшнипе, МГА хули енче наступлени пуçласа ярса, нимĕçсен вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă та, паян, январĕн 21-мĕшĕнче МГА хулипе паха чугун çул узелне—нимĕçсен оборонин хăватлă тĕреклетнĕ пункчĕ пулса тăраканскерне — тытса илнĕ.

Нимĕçсен оборонине татнă çĕрте тата МГА хулишĕн пынă çапăçусенче СВИРИДОВ генерал-лейтенантăн, СТАРИКОВ генерал-лейтенантăн, ПАРАМЗИН генерал-майорăн. АБСАЛЯМОВ генерал-майорăн, ПАНЧЕНКО полковникăн, СОКОЛОВ полковникăн çарĕсем, артиллери генерал-майорĕн КОРОБЧЕНКĂН, артиллери генерал-майорĕн БЕЗРУКАН артиллерисчĕсем тата КИСЛИЦЫН полковникăн танкисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве ячанлăха палăртса хăварас тесе, çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене «МГИНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 21-мĕшĕнче, 23 сехет те 30 минутăра пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, нимĕçсен оборонине татнă тата МГА хулине тытса илнĕ хамăрăн паттăр çарсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, нимĕçсен оборонине татнă çĕрте тата МГА хулишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ
И. СТАЛИН.

1944-мĕш çулхи январĕн 21-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 20-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 20-мĕшĕнче ЛЕНИНГРАД фрончĕн çарĕсем, ăнăçлăн наступлени туса пырса, УРИЦК (Лигово) хулипе чугун çул узелне тытса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса ТИМАЛОВО, БОЛЬШОИ СИМОНОГОНТ, МАЛЫЙ СИМОНОГОНТ, САШИНО, БЕЗЗАБОТНЫЙ СТРЕЛЬНА, СОСНОВАЯ ПОЛЯНА, РЮМКИ, ИННОЛОВО, НИУКАЗИ, МАЛОЕ НИККАРОВО, БОЛЬШОЕ НИККАРОВО, КУТТУЗИ, КАПОРСКАЯ, АЛАКЮЛЯ, КОЦЕЛОВО, МИХАЙЛОВКА, РАСКОЛОВО, НИЖНЯЯ ятлă ялсене тата ВОЛОДАРСКИЙ, ЛЕНИН поселокĕсене тытса илнĕ. ПУЛКОВО районĕнчен наступлени туса пыракан çарсем ОРАНИЕНБАУМРАН кăнтăртарахри районран наступлени туса пыракан çарсемпе пĕрлешнĕ: Аркатса тăкнă нимĕçсен фашистла чăçĕсен сапаланса кайнă уйрăм ушкăнĕсене пирĕн çарсем çавăрса илнĕ те пĕтерсе пыраççĕ.

Ленинград фрончĕн çарĕсем январĕн 14-мĕшĕнчен пуçласа январĕн 20-мĕшне çитиччен çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: тĕрлĕ калибрлă тупăсем—265, вăл шутран Ленинграда персе тăнă артиллери ушкăнĕнче пулнă 85 йывăр тупă, танксем—30, минометсем—159, пулеметсем—274, боеприпаспа хĕçпăшал склачĕсем—18.

Нимĕçсен вĕлернĕ салтакĕсемпе офицерĕсен шучĕ 25.000 çитрĕ.

ВОЛХОВ фрончĕн çарĕсем, тăшмана çавăрса илмелли ăста маневр туса, январĕн 20-мĕшĕнче НОВГОРОД хулине штурмласа тытса илнĕ. Наступление вăйлатса пырса, фронт çарĕсем ДОЛГОВО, СТАРАЯ МЕЛЬНИЦА, БОЛЬШОЕ ЛЯПИНО, ГОРЫНЕВО ятлă ялсене, НАЩИ ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ те НОВГОРОД хулинчен хĕвеланăçнерехри вăрмансенче тăшманăн çавăрса илнĕ чăçĕсене пĕтерес тĕлĕшпе ăнăçлăн çапăçнă.

Çав наступленире Волхов фрончĕн çарĕсем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: тĕрлĕ калибрлă тупăсем—182, вăл шутран хăй тĕллĕн çӳрекен 16 тупă, минометсем—120, вăл шутран ултă кĕпçеллĕ 16 миномет, пулеметсем 635, автомашинăсем—263, тягачсем—21, çар пурлăхĕн склачĕсем—28. Пĕтерсе тăкнă: тĕрлĕ калибрлă тупăсем—178, çунсăр пуçне хăй тĕллĕн çӳрекен 20 тупă, танксем—16, минометсем—110, пулеметсем—365, автомашинăсем — 350.

Нимĕçсен 3.000 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Çапăçу хирĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсен 15.000 виллине çити выртса юлнă.

ХРИСТИНОВКĂРАН сурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен контратакисене ăнăçлăн сирсе янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче развезка тунă, тăшмана хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Январĕн 19-мĕшенче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 94 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 17 самолетне персе ӳкернĕ.

ЯНВАРĔН 21-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 21-мĕшĕнче КРАСНОЕ СЕЛО хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, ГЛУХОВО, ВИТИНО, РЯХМОЗИ, КЕЛОЗИ, ПЕЛЛЯ, РЯХКЕЛЕВО, МУЛДИЯ, РУССКО-ВЫСОЦКОЕ, ТЕЛИЗИ, ЛАГОЛА, КАЙНЕЛАЙЗИ, СКВОРИЦЫ, АРОПАККОЗЫ, МАЛАЯ ИВАНОВКА ятлă ялсене тытса илнĕ. Пирĕн çарсем нимĕçсен фашистла чăçĕсен иртнĕ çапăçусенче çавăрса илсе аркатнă ушкăнĕсене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă.

ТОСНОРАН çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем наступлени пуçласа янă та, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, МГА хулипе чугун çул узелне тытса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса ПЕТРУШИНО, ПАВЛОВО, МУСТОЛОВО, ЦИГРИ, КЕЛКОВО, ТОРТОЛОВО, МИШКИНО, СЛАВЯНКА, КАРБУСЕЛЬ, ЛОДВА, ВИНЯГОЛОВО ятлă ялсене, 1-мĕш ЭСТОНСКИ, МИХАЙЛОВСКИ ятлă поселоксене тата АПРАКСИН ятлă чугун çул станцине йышăнса илнĕ.

НОВГОРОД хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, темиçе ял тытса илнĕ тата НОВГОРОДРАН хĕвеланăçнерехри вăрмансенче тăшманăн çавăрса илнĕ ушкăнĕсене пĕтерсе пынă.

КАЛИНКОВИЧИ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла тапăнса пынă, Полесье облаçĕнчи ОЗАРИЧИ ятлă район центрне тытса илнĕ, çавăн пекех тата темиçе ял йышăнса илнĕ, вăл шутра ОСТРОВ, РЫЛОВИЧИ, ХОМИЧИ, ВИША, САВИЧИ, БЕРЕЗНЯКИ, ПЕСКИ, КАПЛИЧИ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă, тăшмана хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Январĕн 20-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 51 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă.

МЕТРОН ÇĔНĔ ТРАССИ

Январĕн 18-мĕшĕнче Мускаври метрополитетăн виççĕмĕш черетпе тунă Покровски радиусĕ ĕçлеме пуçланă. Вăл трасса Курск вокзалĕнчен пуçласа Измайловăна çитиччен каять, унăн тăршшĕ 7.2 километр.

Çак лини çинче виçĕ çĕнĕ станци уçнă: «Бауманская», «Сталинская», тата Сталин ячĕпе тăракан «Измайловăри культурăпа кану паркĕ». (ТАСС).

Ленинпа Сталин ялавĕпе совет халăхĕ çĕнтерў патне пырать

В. И. Ленин вилни 20 çул тултарнă ятпа 1944 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче пухăннă траурлă чаплă ларура А. С. ЩЕРБАКОВ юлташ тунă доклад

Юлашки

халăха яланах чăннипе, тĕрĕссипе кăна калама хушакан правилăна асра тытса пырса, пирĕн парти, Сталин юлташ ĕçсыннисене вăрçă пуçламĕшĕнчех фашистла вăрă-хурахсем пирĕн Тăван çĕршывшăн калама çук пысăк хăрушлăх туса хуни çинчен яр-уççăн каласа пачĕç. Çакăнпа пĕрлех, çавăн чухнех вăрçăн пуçламĕш кунĕсенчех, пирĕн çулпуççăн, Сталин юлташăн генийĕ вăрçă мĕнле пулса пырассине кăтартса пачĕ, пирĕн Тăван çĕршыв умне килсе тухнă вилĕмле хăрушлăха çĕнтермешкĕн çарпа халăха мобилизацилерĕ. Сталин юлташ ун чухне çапла каларĕ: Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче нимĕçсем тунă анăçусем вăхăтлăх анăçусем çеç пулса тăраççĕ, гитлерла çара, Наполеонпа Вильгельмăн çарĕсене çĕмĕрнĕ пекех, хăваласа ярса çĕмĕрĕпĕр, терĕ. Сталин юлташăн сăмахĕсем пурнăçа кĕрсе пынине халĕ ĕнтĕ пурте кураççĕ.

Иртнĕ çулталăк, вăрçă тĕлĕшĕнчен илсен, Хĕрлĕ Çар питех те пысăк çĕнтерўсем тунă çулталăк пулса тăчĕ. Отечественнăй вăрçă пынăçемĕн ĕçсем тĕпренех улшăнчĕç. Сталинградри çапăçу çав татăклă улшăнăвăн пуçламĕшĕ пулса тăчĕ. Гитлеровецсем йывăр кризисран тухассипе çапах та хăйсене йăпатнăччĕ, вăл шанчăка вĕсем хăйсем çуллахи наступленийĕпе сыхăнтарма ĕмĕтленнĕччĕ. Анчах та иртнĕ çулти çулла нимĕçсем вăхăтлăх анăçусем те тума пултараймарĕç.

Хăйсен çуллахи кая юлнă наступленине пуçланă чухне гитлеровецсем çапла пĕлтерчĕç: çакă вăл Германи пĕтĕмпех çĕнтерсе çиеле тухмалли татăклă поход пулса тăрать, терĕç. Анчах та Хĕрлĕ Çар нимĕçсен çуллахи наступленине пĕтерсе лартрĕ. Курск патĕнче Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла çарĕсене тепĕр хут калама çук вăйлăн пырса çапрĕ. Курск çине наступлени тума янă нимĕçсен çарĕсене аркатса тăкрĕç, гитлеровецсем вара пирĕн çарсем хĕссе пынине чăтса тăма пултараймарĕç, пирĕн çарсем хăйсен çуллахи наступленине анăçлăн сарса ячĕç. «Сталинград патĕнчи çапăçу нимĕçсен фашистла çарĕ пĕтсе ларассине пĕлтерчĕ пулсан,—тенĕ Сталин юлташ, — Курск патĕнчи çапăçу вара ăна катастрофа умне илсе пычĕ».

Иртнĕ çулта пирĕн çарсем пĕтĕм çăвĕпех тата кĕркунне нимĕçсене пĕр чарăнмасăр хĕвеланăçнелле хăваласа пычĕç, тăшманăн нумай вăхăтлăха тунă оборона сооруженийĕсене çĕмĕре-çĕмĕре пычĕç, чи пысăк юханшывсем урлă каçса кайрĕç, тăшман хаярран хирĕç тăнине аркатса пычĕç, совет çĕрне пирĕн Тăван çĕршывăн ылханлă тăшманĕсенчен утăм хыççăн утăм тасатса пычĕç.

Германи командованийĕ Днепр линине кирек мĕнле пулсан та хăйĕн аллинче хăварма тăрăшрĕ. Сентябрь вĕçĕнче Гитлер командованийĕ хăйĕн çарне: урăх пĕр утăм çĕре те пама юрамасть, текен приказ пачĕ. Гитлер нимĕçсене çапла каласа ĕнентерме тăрăшрĕ: Днепр шывĕ икĕ çара пĕр-пĕринчен уйăрса тăракан рубеж пулĕ, Днепр çинчи хĕллехи позицисене лайăх çирĕплетнĕ, вĕсене никам та тытса илес çук, терĕ. Берлинри радио Днепр шывĕн сарлакăшĕпе тарăнăшĕ çинчен, унăн хĕвеланăç енчи çыранĕ çўллĕ пулни çинчен, Днепр шывĕ хĕрринчи çўллĕ вырăнсем çинче нимĕçсен позицийĕсем мĕнле те никам тытса илейми çирĕп пулни çинчен нумай калерĕ. Днепр çинчи позицисенче гитлеровецсем çирĕп тытăнса тăрасшăн пулнă. Анчах, халăх калашле, кĕсре туртаран тытăнса тăнă-тăнă та ўкнĕ. (Залра кулаççĕ, хусканаççĕ).

Совет çарĕсем октябрь пуçламĕшĕнчех Днепр шывĕ урлă каçса унăн сылтăм енче темиçе плацдарм туса хучĕç. Пĕр уйăх иртсен вара совет ялавĕ Украинăн ирĕке кăларнă столици çинче ялкăшма пуçларĕ. Нимĕçсене Киевран хăваласа кăларнă хыççăн Германин Днепр çинче тытăнса тăма шутласа хунă планĕсем пĕтĕмĕшпех путланса ларчĕç. Ку çеç те мар, пирĕн çарсем Киева илнĕ хыççăн Днепрăн сылтăм енчи Украйнăшăн çапăçу пуçланса кайрĕ.

Вăрçă ĕçĕнче иртнĕ çулталăкра пулнă татăклă улшăнусен урокĕсем çакна уççăн кăтартса параççĕ: тĕрлĕрен «тотальнăй» мобилизацисем туса ирттерни пулин те, нимĕç çарĕ вăйсăрланнăçемĕн вăйсăрланса пырать, Хĕрлĕ Çарăн вăйĕсем вара ўснĕçемĕн ўссе пыраççĕ. Çакă вăл ак çакăнтан курăнать: пирĕн çарсем пĕр çул ытла ĕнтĕ вăрçă ĕçĕсенчи пуçарулăха хăйсен аллинче тытса пыраççĕ. Çакă вăл тата ак çакăнтан курăнса тăрать: нимĕçсем пуçарулăха Хĕрлĕ Çар аллинчен туртса илме хăтланнисем пурте путланса лараççĕ. Нимĕçсен фронтăн ансăр участокĕсенче тăвакан контратакисем те вĕсене кирлĕ пек результатсем памаççĕ, çав контратакăсене пирĕн çарсем анăçлăн сире-сире яраççĕ. Ансăртран мар ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар иртнĕ çулталăк хушшинче нимĕç çарĕсене хăшпĕр тĕлте 1.500 километр таран хĕвеланăçнелле хăваласа ячĕ. Кубаньри, Дон çинчи, Днепрăн сулахай енчи Украинăри питĕ паха ялхуçалăх районĕсенчен тата промышленноçăн питĕ пысăк центрĕсенчен—Донбасран, Запорожьерен, Днепропетровскран, Кировоградран тата ыттисенчен те нимĕçсем хăйсен ирĕкĕпе тухса кайман ĕнтĕ. Вĕсене унтан пирĕн Хĕрлĕ Çар хĕссе кăларнă. Хĕрлĕ Çар халь Ленинград патĕнче чаплă çĕнтерўсем тăвать.

Гитлерăн ухмахĕсем, суеçтере-суеçтере йăлтах пăтрашăнса кайнăскерсем, нимĕç çарĕ мĕншĕн чакнине питĕ ухмахла ăнлантарса параççĕ. Нимĕç çарĕсене Сталинград патĕнче аркатса тăкнă хыççăн гитлеровецсем çапла калатчĕç: «Сталинграда çухатни пысăк вырăнах йышăнмасть-ха вăл. Совет çарĕсем акă Дон е Кубань районĕсене тытса илсен—вăл чăнах та вара пирĕншĕн пысăк çухату пулать», тетчĕç. Нимĕç çарĕсене Донпа Кубань районĕсенчен хăваласа кăларнă хыççăн, нимĕçсем мухтанкаласа çапла калатчĕç: «Донпа Кубане çухатни вăл нимех те мар. Совет çарĕсем акă Донбаса тытса илсен,—вăл чăнах та пирĕншĕн пысăк çухату пулать», тетчĕç. Нимĕç çарĕсене Донбасра аркатса тăкнă хыççăн, гитлеровецсем çапла пакăлтатрĕç: «Донбасра позицисем мелле пулмарĕç. Совет çарĕсем акă Днепр шывĕ урлă каçсан,—вăл чăнах та урăх ĕç», терĕç.

Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе, нимĕçсем фронт линине 1941 çулхи хĕлле «кĕскетсе пычĕç», 1942 çулхи хĕлле тата 1943 çулхи çулла фронта çапла кĕскетсе пычĕç, халĕ, 1944 çулхи хĕлле те, çав ĕçпех аппаланаççĕ. Анчах, халăх калашле, «кĕскетĕн те каялла тавăрайман». Антив, «кĕскетчĕр», «пĕчĕклетчĕр». Пирĕн çарпа халăх çакна ĕненсе тăраççĕ: гитлеровецсем фронта кĕскете-кĕскете ăна çак таранах çитерĕç: нимĕç çарĕшĕн фронтăн чи кĕске линийĕ Берлин таракан Шпрее шывĕ тăрăх пулĕ. **(Шавлăн алă çупаççĕ).**

Совет стратегийĕпе тактики, çар ĕçне пĕлни тата пирĕн çарсен шухăш-кăмăлĕсем тăшманăннинчен маларах тăнине вăрçăн пĕтĕм тăршшĕнче питĕ лайăх кăтартса панă. Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче Хĕрлĕ Çарăн Верховный Главнокомандованийĕ хатĕрленĕ чи пысăк операцисене пурнăçа кĕртнĕ чухне, пирĕн генералсемпе офицерсем операцисем тăвас ăсталăхăн çав тери паха тĕслĕхĕсене кăтартса пачĕç, Хĕрлĕ Çарăн салтакĕсем вара паттăрлăха тата çапăçма пĕлнине кăтартса пачĕç.

Совет çĕршывĕ хăйĕн сталинла чаплă генералĕсемпе, совет армийĕсен пуçлăхĕсемпе савăнса мухтанать.

Совет çĕршывĕ Хĕрлĕ Çарăн боевой офицерĕсемпе, вăрçăпа çар искусствин сталинла питĕ чаплă шкулĕ витĕр тухнăскерсемпе, савăнса мухтанать.

Совет çĕршывĕ хăйĕн çарĕн салтакĕсемпе, вырăс воинĕн ĕмĕрхи чапне ўстернĕскерсемпе, савăнса мухтанать.

Халĕ пĕтĕм ĕç çакăнта: тунă çитĕнўсемпе лăпланса лармалла мар. Çакна нихăçан та манмалла мар: тăшман та пĕр вырăнта тăмасть, нимĕç командованийĕ, фашистла çар пĕтĕмпех пĕтсе ларас срока тăсма тăрăшса, çапăçмалли çĕнĕ мелсем шухăшласа кăларма тăрăшать. Акă мĕншĕн ĕнтĕ **совет военачальникĕсен çирĕп законĕ—Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ çар ăсталăхне ним чарăнмасăр лайăхлатса пыма хушнине пĕр пăркаланмасăр пурнăçласси, çар ăсталăхне вĕренсе алла илес ĕçре куллен-кун çĕнĕ пусăм çўлерех хăпарса пыма хушнине пурнăçласси пулса тăрать.**

Çакăн пирки иккĕленмелли çук. Хĕрлĕ Çарпа унăн командирĕсем Сталинăн приказĕсене ним пăркаланмасăр пурнăçласа пырĕç, пĕр чарăнмасăр, пĕр ывăнмасăр вĕренĕç, хăйсен çар ăсталăхне лайăхлатнăçемĕн лайăхлатса пырĕç, тунă çитĕнўсемпе лăпланса лармĕç.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем вĕсем—совет стройĕ фашизмăн юнлă режимне çĕнтерни пулса тăраççĕ. Хĕрлĕ Çарта, ăна йĕркелесе тунинче, унăн стратегиллĕ правилинче, çăмăл улшăнакан тактикинче, питĕ чаплăн хĕçпăшалланнинче, шухăш-кăмăлĕсем питĕ лайăх пулнинче совет государствин системи çав тери лайăх пулни, Совет Союзĕ гитлерла Германирен малта тăни паларса тăрать.

Юлташсем! Хĕрлĕ Çарăн Верховный Главнокомандованийĕ çар ĕçĕсене ертсе пыни тăшманăн мĕн пур планĕсене ўпĕнтерсе ячĕ, вăрçа пирĕн майлă çаварчĕ. Çапăçакан енсенчен пĕриншĕн малтан çав тери начар пынă вăрçа кайран çав тери ăстан ун майлă çаварса яни, вăрçа генийĕн çирĕп алли ертсе пыракан çар çавăн пек çĕнтерўсем туса пыни вăрçăсен историйĕнче пулман. Совет халăхĕ нимĕç ирсĕрĕсене хирĕç туса пыракан Отечественнăй аслă вăрçă—Сталин юлташ ертсе, хавхалантарса пыракан çак вăрçă—çарсене çав тери ăста ертсе пынин тĕслĕхĕ тата вăрçă ĕçри аслă искусствăн тĕслĕхĕ пулса, вăрçăсен историне кĕрсе юлать. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

ПИРĔН ВĂЙСЕМ ЎССЕ ТĔРЕКЛЕНЕÇÇĔ

Сталин юлташ пире çапла вĕрентет: вăрçăра хăш государствăсемпе çарсен вăйĕсем вăрçă пынăçемĕн ўссе пыраççĕ, çавсем çĕнтереççĕ, хăшĕсен вăрçă пынăçемĕн вăйĕсем чакса пыраççĕ, çавсем поражени тўсеççĕ. Гитлерла захватчиксене хирĕç пыракан вăрçăн пуçламĕшĕнчех Сталин юлташ çакна витĕр курса тăнă: темиçе облаçпа хулана вăхăтлăха çухатнă пулин те, çак вăрçă пынăçемĕн пирĕн вăйсем ўссе пырĕç, вăрçăра эпир çĕнтерĕпĕр, çĕнтерў пирĕн алăра пулĕ, тенĕ. Малтанах çакăн пек витĕр курса тăнине вăрçă пĕтĕмĕшпех тĕрĕсе кăларчĕ.

Вăрçă пуçламĕшĕнче пирĕн халăх умне, пуринчен малтан пирĕн рабочи класс умне, промышленноçри инженерла-техникла работниксем умне çакăн пек задача тухса тăчĕ: хĕçпăшалсем туса кăларас ĕçе сарса ямалла, танксен, самолетсен, минометсен, автоматсен хисепĕ тĕлĕшпе нимĕçсем пирĕнтен малта тăнине пĕтерсе хумалла. Çакă вăл питĕ йывăр задача пулнă. Ун чухне совет государстви вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче халăх хуçалăхĕн вăйĕсене ўстерме, çар индустрине хăвăрт аталантарма пултарать-и, тенĕ ыйту тухса тăнă. Çакăн пек задачăна пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçă вăхăтĕнче, çав задача ун чухне питĕ пĕчĕккĕн тухса тăнă пулин те, патша Российи те, Вильгельм Германийĕ те татса параймен. Вăрçă пынăçемĕн вĕсен экономики чакса, юхăнса пынă. Гитлеровецсем пирĕн совет экономикин кунçулĕ те çавăн пекех пулĕ тесе калатчĕç. Анчах вĕсем çапла каласа хуни тĕрĕс мар пулчĕ. Совет хуçалăхĕ вăрçăн йывăр условийĕсенче те çаплах аталанса, хăйĕн хăватне ўстерсе пычĕ.

Пирĕн паттăр халăх, пуринчен ытла промышленноçпа транспортри рабочисем, инженерла-техникла работниксемпе пĕрле, çав задачăна ăнăçлăн пурнăçларĕç.

Рабочи класăн, инженерсемпе техниксен боевой задачи халь—хĕçпăшалсем, боеприпассем, снаряжени туса кăларассине, металл шăратассине, çĕркăмрăк кăларассине, электричество энергийĕ тăвассине малалла ўстересси пулса тăрать, транспортри работниксен задачи вара — снаряжение фронта хăвăрт çитересси пулса тăрать.

Хĕрлĕ Çарпа халăха апат-çимĕç, промышленноçа — чĕртавар парса тăмашкăн ялхуçалăхĕнчи халиччен курман питех те пысăк йывăрлăхсене, Украинăн, Донăн тата Кубанĕн ялхуçалăх районĕсене вăхăтлăха çухатнă пирки тухса тăнă йывăрлăхсене сирсе ямалла пулнă, çав çухатусене хĕвелтухăç районĕсенчи ялхуçалăхне аталантарнипе пăртак та пулин тивĕçтермелле пулнă.

Совет Союзĕнчи колхоз хресченĕсем вăрçă вăхăтĕнчи çав питĕ йывăр задачăна татса пама, Хĕрлĕ Çарпа çĕршыва апат-çимĕçпе чĕртавар парса тăма пултарчĕç.

Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсен тата совхозсемпе МТС-сен работникĕсен боевой задачи халь — фронтпа çĕршыв валли ялхуçалăх продукци тăвассине ўстересси пулса тăрать.

Вăрçăн виççĕмĕш çулĕнче пирĕн йĕркеленсе çитнĕ тата хăвăрт ўссе пыракан çар хуçалăхĕ пур. Çапла вара, совет хуçалăхĕ вăрçă пынă çемĕн хăйĕн вăйĕсене ўстерсе пыма пултарчĕ, çапла тунипе вăл хăй нимĕçсен фашистла чуралла-крепостла экономикинчен малта тăнине кăтартса пачĕ.

Пирĕн хуçалăха тĕреклетмелли çĕнĕ вăй вăл оккупантсенчен ирĕке кăларнă районсенче сарăлса кайнă пултарулла ĕç пулса тăрать.

Оккупантсен ури айĕнче пулнă промышленноçпа ялхуçалăхĕн чечекленсе ларакан районĕсене нимĕçсем çаратса, ишсе пĕтернĕ. Çав районсене пурнăç Хĕрлĕ Çарпа пĕрле пырса кĕчĕ. Донбаса ирĕке кăларни темиçе уйăх çеç иртрĕ—Донбасри çĕркăмрăкĕ чугунçулсем çине, фабрикăсемпе заводсене çитрĕ те ĕнтĕ. Шахтăсене, металлурги заводĕсене тата ытти заводсене юсаса ура çине тăратас ĕçе анлăн туса пыраççĕ. Ку вăл хуçалăха юсаса йĕркелес ĕçĕн пуçламăшĕ кăна-ха, çак ĕçе пĕтĕм çĕршыв хутшăнчĕ.

Партипе правительство, нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă халăхăн этем пек йĕркеллĕн пурăнма кирлĕ пур условисем те пулччăр тесе, халех ĕнтĕ, вăрçă условийĕсенчех, тимлĕн тăрăшаççĕ. Партипе правительство пирĕн фронтовиксен çемьисемшĕн уйрăмах хытă тăрăшаççĕ.

Ĕлĕкхи вăрçăсенче салтаксен çемьисене никам та пулăшман, вĕсем юхăнса, чухăна тухса пынă.

Хĕрлĕ Çарăн воинĕсем хăйсен çемьисемшĕн Совет государстви тăрăшнине кураççĕ. Вĕсем Совет влаçĕ вĕсен хăйсен тăван влаçĕ пулса тăнине, çав власть вĕсен арăмĕсемпе ачисене, ашшĕсемпе амăшĕсене нимĕç ирсĕрĕсем аркатнă хуçалăха юсаса йĕркелеме пулăшассине пĕлеççĕ. Пирĕн çарсен шухăш-кăмăлĕсем питĕ лайăх пулнин сăлтавĕсенчен пĕри çакăнтан килет ĕнтĕ.

Нимĕç ирсĕрĕсем юнлă тискер ĕçсем туса, терророла, виселицăсемпе, «душегубкăсемпе» усă курса, пирĕн халăхăн ирĕкĕпе çирĕплĕхне çĕмĕрме хăтланчĕç. Фашистла вăрă-хурахсем тунă тискер ĕçсем Хĕрлĕ Çар наступлени туса пынă кунсенче кашни кун ытларах та ытларах паларса пыраççĕ. Нимĕç вăрă-хурахĕсем, çынçиенсем пек, нимĕн шеллемесĕр, темиçе çĕр пин совет çыннине асаплантарнă, çакса вĕлернĕ, касса-туранă, çунтарнă, «душегубкăсенче» пăчăхтарса вĕлернĕ. Нацин чи лайăх пайне, совет халăхĕн чи активлă, ĕçлесе пурăнма пултаракан пайне пĕтерсе тăкасси, ыттисене вара хăратса пĕтерсе хирĕç чĕнмен тарçăсем туса хурасси,—ак çакăн пек ĕнтĕ гитлеровецсен юнлă политики. Анчах та гитлерла вăрă-хурахсен çак ĕмĕтне те совет патриочĕсем путарса лартнă. Хĕрлĕ Çар темиçе миллион совет çыннине фашистла чуралăхран çăлса кăларчĕ. Нимĕçсен тискер ĕçĕсем совет халăхĕн ирĕкне хуçаймарĕç, вĕсем ăна нимĕç захватчикĕсене татах та ытларах çилленекен, татах та ытларах курайми туса хучĕç. Нимĕç тискер-кайăкĕсене тавăрмалла, вĕлермелле!—акă гитлерла çынçиенсене паракан пирĕн ответ. **(Нумайччен алă çупаççĕ).**

Вăрçă вăхăтĕнче гитлерла Германие хирĕç кĕрешекен мĕнпур халăхсен умĕнче Совет Союзĕн авторитечĕ ўсрĕ, унăн тулашри политикăлла çыхăнăвĕсем çирĕпленчĕç.

Демократиллĕ çĕршывсене пĕр-пĕринчен уйăрса яма шутласа хунă Гитлерăн планĕсем ишĕлсе анчĕç. Гитлера хирĕçле коалицири çĕршывсем пĕр-пĕрне шанни тата вĕсен пĕрлĕхĕ çирĕпленчĕ. Çакна пуринчен малтан Мускаврипе Тегеранри конференцисен решенийĕсем кăтартса параççĕ. Мускаврипе Тегеранри конференцисенче гитлерла Германие пĕтĕмпех тата татăклăнах аркатса тăкмалли план тунă, союзлă виçĕ держава палăртса хунă çар операцийĕсен вăхăчĕсем пирки, вăрçă операцийĕсем хăш енчен тата мĕн пысăкăш пулмалли пирки калаçса татăлнă.

* * *

Юлташсем! Иртнĕ çулталăк хушшинче совет халăхĕ, гитлерла Германине татăклăн çĕнтермелли вăхăта çывхартас тесе, нумай та çине тăрса ĕçлерĕ. Халь ĕнтĕ ĕç гитлерла Германие аркатса тăкасси патнелле пыни паллă. Нимĕç çарĕ катастрофа умĕнче тăрать. Анчах вăл хăй тĕллĕнех арканса каяс çук. Эпир, большевиксем, çитĕнўсемпе савăнса лăпланса ларни каçарми йăнăш пулнă пулĕччĕ.

Пирĕн партие Ленинпа Сталин вĕрентсе çитĕнтернĕ, вĕсем лăпланса ларнине тўссе тăмаççĕ, партие вĕсем тунă çитĕнўсемпе савăнса-лăпланса лармалла мар тесе вĕрентеççĕ. Тунă çĕнтерўсем,—тесе вĕрентеççĕ пире Ленинпа Сталин,—çĕнĕ çĕнтерўсем, çĕнĕ анăçусем тумалли никĕс пулса тăмалла. Анăçусемпе çитĕнўсем хăшпĕр чухне пуçа çавăраççĕ, лăпланса ларма, хамăр вăйсене ытлашши хаклама, тăшман вăйĕсене çителĕксĕр хаклама, хамăр çине ытлашши шанма тата каппайса ларма тĕртеççĕ. Çак шухăш-кăмăлсем вĕсем кирек хăçан та пысăк хăрушлăх пулса тăнă, вĕсем вăрçă условийĕсенче пушшех те хăрушă. Пирĕн хушăмăрта лăпланса ларас шухăш-кăмăлсем пуринчен ытла сарăлас пулсан, эпир çĕнтерў ĕçне пĕтерсе лартнă пулăттăмăр.

Çĕнтерес тесен, пирĕн халăхăн, пирĕн партин татах та нумай вăй хурса ĕçлемелле пулать-ха. Фашистла захватчиксене тĕппипех пĕтерсе тăкмашкăн пирĕн халăхăн мĕнпур вăйĕсене, пирĕн çарăн пĕтĕм хăвачĕпе ăсталăхне мобилизацилемелле, мĕншĕн тесен кĕрешмесĕр, вăй хумасăр çĕнтерме çук,—тенĕ Сталин юлташ,—çĕнтерĕве ăна кĕрешсе туянаççĕ. Татăклăн çĕнтермелли куна çывхартас тесе, Хĕрлĕ Çар, совет тылĕ, пирĕн пĕтĕм халăх пĕтĕм вăйпа тăрăшĕç.

Пирĕн çĕршывпа, пирĕн халăх хушшинче ертсе пыракан тата организацилекен вăй—большевиксен партийĕпе пирĕн çулпуçăмăр Сталин юлташ пулса тăрать. **(Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Большевиксен партийĕ пирĕн çĕршыври ĕççыннисене ирĕклĕ, социализмлă хăватлă государство тума илсе пычĕ, пирĕн çĕршывшăн пысăк хăрушлăх килсе тухсассăн — совет халăхне ирсĕр нимĕç захватчикĕсене хирĕç пуçланнă Отечественнăй чыслă вăрçа çĕклерĕ.

Ленинпа Сталин партийĕ халăх вăйĕсене пĕр тĕллев кăтартса пачĕ. Октябрьти Социализмлă Аслă революци çĕнтерсе илнисене, пирĕн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хўтĕлесе хăварма организацилерĕ.

Ленинпа Сталин партийĕ халăха яланах совет патриочĕ пулма, хăйĕн Тăван çĕршывне чунтан-чĕререн юратма, çапăçура хăрамасăр тăма, Совет государствин тăшманĕсемпе пĕр шеллемесĕр çапăçма вĕрентнĕ. Большевиксен партийĕ халь тивĕçлипех çапла калама пултарать: унăн нумай çулсем хушшинчи ĕçĕ лайăх результатсем пачĕ.

Отечественнăй вăрçăра пирĕн халăх никам çапса аркатайми пĕрлĕх кăтартрĕ. Пĕтĕм çĕршыв хăйĕн аслă та аслă çулпуçĕ тавра пĕрлешрĕ. Ленинăн чи çывăх юлташĕ, унăн вилĕксĕр вĕрентĕвне малалла аталантарса пыракан, Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ пирĕн çарпа халăха тăшмана пĕтĕмпех çĕнтерме, пирĕн тĕрĕслĕхлĕ ĕçе çиеле кăларма ертсе пырать. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Сывă пултăр ленинизм, пирĕн çапăçусенче тĕрĕсленнĕ шанчăклă ялав! Эпир çак ялавпа çĕнтерсе пынă, малашне те çĕнтерсе пырăпăр! **(Алă çупаççĕ).**

Сывă пултăр совет халăхĕ, халăх—герой, халăх—воин! **(Алă çупаççĕ).**

Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар тата Тинĕс-Çар Флочĕ! **(Алă çупаççĕ).**

Сывă пултăр пире татăклă çĕнтерў патне ертсе пыракан Сталин юлташ! **(Пĕтĕм зал тăвăллăн алă çупать. Ларури мĕнпур çынсем ура çине тăрса парти гимнне—«Интернационал» юрлаççĕ).**

ЭСТОНИ ССР-ĔНЧИ ПАРТИЗАНСЕНЕ ОРДЕНСЕМПЕ НАГРАДĂЛАНИ

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç партизанла кĕрешнĕ çĕрте хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн тата партизанла юхăма ўстерсе ярас тĕлĕшпе уйрăмах пысăк ĕçсем тунăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх çапла наградăланă:

Ленин орденĕпе—2 çынна;
Хĕрлĕ Ялав орденĕпе—3 çынна;
II-мĕш степень Отечественнăй вăрçă орденĕпе—2 çынна;
Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе—12 çынна;
«Хисеп палли» орденпа—2 çынна наградăланă. (ТАСС).

НАУКĂПА ИЗОБРЕТАТЕЛЬСТВО ТĔЛĔШПЕ СТАЛИНЛА ПРЕМИСЕМ ПАРАКАН КОМИТЕТĂН ЛАРĂВĔ

Январĕн 17-мĕшĕнче Наукăпа изобретательство тĕлĕшпе Сталинла премисем паракан комитетăн ларăвĕ пулса иртнĕ. Вăл—Комитет сессийĕн пĕррремĕш ларăвĕ пулнă. Çав сессие 1943 çулта чи паллă научнăй ĕçсемшĕн, изобретенисемшĕн тата производство ĕçĕн меточĕсене тĕпрен лайăхлатас тĕлĕшпе Сталинла премисем илме тивĕçлĕ кандидатсене суйлас пирки пухнă.

Сталинла премисем илес тесе 700 ытла тĕрлĕ ĕçсем тăратнă. (ТАСС).

В. И. Ленин вилнине асăнса траурлă чаплă лару

Большевиксен хăватлă партийĕпе Совет государствин генилле организаторĕ, тĕнчери пĕтĕм халăхăн асĕнче ĕмĕр-ĕмĕр тăракан аслă В. И. Ленин вилни 20 çул тултарнă кун ĕнер, Советсен çуртĕн пысăк залĕнче Шупашкарта партипе совет тата профсоюзпа комсомолăн хула организацийĕсен траурлă чаплă ларăвĕ пулса иртрĕ.

Траурлă чаплă лару хăйĕн хисеплĕ президиумне аслă В. И. Ленинăн вĕрентĕвĕпе ĕçне çирĕп пурнăçа кĕртсе пыракан, халăхсен аслă çулпуçне, хăватлă Хĕрлĕ Çарăн Верховный Главнокомандующине И. В. Сталин юлташа тата вăл ертсе пыракан ВКП(б) Центральный Комитечĕн Политбюро членĕсемпе кандидачĕсене суйларĕ.

20 çул Ленинсăр—Ленин çулĕпе, Сталин юлташ ертсе пынипе, большевиксен партийĕпе совет халăхĕ çĕнĕ çĕнтерўсем туса пыни çинчен траурлă чаплă ларура ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ И. К. Иванов юлташ доклад туса пачĕ. Иванов юлташ хăйĕн докладĕнче Сталин юлташ ертсе пынипе, большевиксен партийĕпе совет халăхĕ Тăван çĕршыва хурçă пек çирĕп вăйлă Хĕрлĕ Çар, малта тăракан индустрипе колхозлă строй туса хуни çинчен, Совет Союзĕнчи пĕтĕм халăхсем Сталинла Конституци ялавĕ айĕнче пĕтĕçсе хурçăланни çинчен, пĕтĕм халăхăн вăй-хăвачĕ фашистла Германие хирĕç пĕр-харăс çĕклени çинчен тата пирĕн чаплă Хĕрлĕ Çар отечественнăй аслă вăрçăра тискер тăшмана кунран-кун вăйлăран та вăйлăрах çапса аркатса пыни çинчен каларĕ.

Траурлă чаплă лару тăвăллăн алă çупса Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕ.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Адриатика тинĕсĕ çыранĕнче Канада çарĕсем йышăнса тăракан секторта, тăшман вăйлăн хирĕç тăнă пулин те, пăртак малалла куçнă. Америкăн 5-мĕш армийĕн фронтĕнче союзниксен çарĕсем çĕнĕрен малалла куçнă, вĕсем Сан Элиана тытса илнĕ.

Союзниксен йывăр бомбардировщикĕсем, истребительсем хўтĕлесе пынипе, ĕнер Пратора, Понтассьевере тата Ареццора (Флоренци районĕ) чугун çулсем çине бомбăсем пăрахнă. Союзниксен авиацийĕ çавăн пекех тата тăшманăн Италири ытти объекчĕсем çине те бомбăсем пăрахнă. Шибеник гаванĕнче (Югославия) бомба пырса тивнипе тăшманăн суту-илў судни сирпĕнсе кайнă.

ЛОНДОН, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, 5-мĕш армири акăлчансен чаçĕсем, тăшман вăйлăн хирĕç тăнă пулин те, Гарильяно шывĕн анат тăрăхĕнчи айлăмĕпе малалла куçса пынă, нумай вырăнсенче çав шыв урлă каçса кайнă. Англин 8-мĕш армийĕн фронтĕнче Канада çарĕсем вăйлă çапăçнă.

Союзниксен флочĕ чылай пунктсенче тăшман суднисене тата Адриатика тинĕсĕнче хăшпĕр портсене пенĕ.

Союзниксен авиацийĕ Çурçĕр Италире тата Югославире чугун çулсемпе тăшманăн ытти объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, январĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Америкăн 5-мĕш армийĕнчи акăлчансен чаçĕсем Тирренски тинĕс енинче çапăлах наступлени туса пынă. Халăх пурăнакан виçĕ пункта тытса илнĕ. Тăшман хаярран хирĕç тăрать, вăл икĕ хутчен вăйлă контратакăсем тунă, вĕсене иккĕшне те сирсе янă. 5-мĕш армипе 8-мĕш армин фрончĕсенчи ытти участоксенче дозорсем çапăçнă.

Январĕн 19-мĕшĕнче йывăр тата вăтам бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем тăшманăн вăтам Италири аэродромĕсене атакăланă. Çăмăл бомбардировщиксем вăтам Италири Сульмонерипе Коллеферрори чугун çул сооруженийĕсене атакăланă. Истребительсемпе истребитель-бомбардировщиксем çапăçусем пыракан районри артиллери позицийĕсене, вăтам Италири чугун çулсен вагонĕсене тата тăшманăн Югославири çыранĕсенче тăнă суднисене тапăннă.

КĔСКЕН

● Çĕнĕ Гвинейăн хĕвелтухăç çыранĕ патĕнче союзниксен авиацийĕ японецсен 14 баржине, пысăк мар парăслă 4 кимĕ тата çăмăл кимĕсем нумай путарнă.

● Гитлеровецсем Францире 16 çула çитнĕ ачасене мобилизацилеççĕ. Фашистсем çав çамрăксене чугун çулсемпе кĕперсене сыхлакан чаçсене илеççĕ.

Ответлă редакторшăн
П. Т. ЗОЛОТОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

Типографи №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. С. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.

НТ 00014